11-137

К. НИКОЛАЕВА

# СОВЕТ ХӖРАРӐМӖСЕМ— ТӐВАН ҪӖРШЫВА ХӲТӖЛЕМЕ!

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1941

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

К. НИКОЛАЕВА

# СОВЕТ ХĔРАРĂМĔСЕМ— ТĂВАН ÇĔРШЫВА ХӲТĔЛЕМЕ!

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1941

Редактор **И. Павлов-Пинер.**

Подписано к печ. 12/VII—41 г.
НТ 2731 Зак. № 361. Фор. бум.
60 × 92 1/32. Объем 0,43 п. л.
Тираж 3000 экз.

г. Чебоксары, тип. № 1 Управл.
издательств и полиграфии при
СНК ЧАССР.

Пирĕн чаплă тăван çĕршывăн нумай миллионлă аслă халăхĕ пурте пĕр çын пек пулса—Германин иртĕхсе, урса кайнă фашизмне хирĕç отечественнăй вăрçа çĕкленчĕ. Пирĕн пĕтĕм халăх патриотизм туйăмĕпе çĕкленнĕ. Совет çĕршывĕнче кашни çын фашистсен хура вăйĕсене хирĕç вăрçа тухса, вĕсене пĕтерсе хумаллах çĕмĕрсе тăкасшăн чĕререн çунса тăрать. Ку тăшман—чее те усалскер—вăйлă хĕçпăшалланнă.

Пирĕн таса çĕршыв çине вă-

ră-хурахла тапăннă Германия фашисчĕсем эпир çĕнтерсе илнисене, пирĕн тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсен паттăрла кĕрешĕвĕпе илнĕ, Ленин—Сталин аслă партийĕ ертсе пыни тăрăх миллионшар çынсен паттăрла ĕçĕпе тунă пирĕн телейлĕ пурнăçа пĕтерсе хума тăрăшнине Совет халăхĕ пит аван пĕлет.

Çак ответлă кунсенче, тăван Хĕрлĕ Çар, Тинĕс-Çар Флочĕ, чаплă авиаци фронтсенче вăрă-хурахла фашистла бандăсене хирĕç геройла паттăрăн çапăçнă кунсенче, Совет хĕрарăмĕсем хăйсен упăшкисемпе, шăлнĕ-пиччĕшĕсемпе, ывăлĕсемпе пĕрле пулса, хаяр тăшмана çĕмĕрсе тăкмаш-

кăн вăйĕсене мобилизацилеççĕ.

Миллионшар Совет хĕрарăмĕсен чĕрисем тăшман çине тарăхнипе, ăна курайманнипе хыпса çунаççĕ. Хăйсем çĕнтерсе илнисене, хăйсен телейне, пĕтĕм халăхăн тата хăйсен ачисен савăнăçлă пурăнăçне Совет хĕрарăмĕсем нихăçан та, никама та парас çук.

Совет хĕрарăмĕсем—тĕнчери чи ирĕклĕ хĕрарăмсем. Вĕсем кĕрешĕвĕн хаяр шкулĕ витĕр тухнă. Граждан вăрçине пурте астăваççĕ, ун чухне чухăнлăх, выçлăхпа сивĕ условисенче советла социализмлă çамрăк республика пирĕн çĕршыва йĕритавра хупăрласа тăракан нумай

йышлă тăшмансене хирĕç кĕрешнĕ. Ун чухне те, кĕрешĕвĕн çав йывăр çулĕсенче те, пирĕн çĕршыв хĕрарăмĕсем хăйсен пуçĕсене тайман, позицисене тăшмана паман. Вĕсем упăшкисемпе, пиччĕшĕ - шăлнĕсемпе, ывăлĕсемпе пĕрле паттăрăн кĕрешсе, тăшмана аркатса тăкрĕç. Пирĕн çĕршыв çине нимĕç оккупанчĕсем вăрă-хурахла çаратас тĕллевпе мĕнле тапăнса кĕнине тата вĕсене халăхпа пĕрлешнĕ Хĕрлĕ Çар мĕнле çĕмĕрсе тăкнине кам астумасть-ха? Акă халĕ те Германия фашисчĕсем, Совет çĕрĕ çине тапăнса, пирĕн çĕршывăн пуянлăхне—нефте, метала, кăмрăка, тырра туртса илесшĕн.

Ултавлă вăрă-хурахсем ун пек тума пултараймĕç! Пирĕн мĕнпур халăх пурте—хĕрарăмсем те, арçынсем те—çав çĕлен-калтасене пĕтĕмĕшпе пĕтеричченех çапса çĕмĕрĕ.

Фашистла варвăрсене хирĕç кĕрешӳ ним каçарусăр хаяр пулмалла. Пирĕн хамăрăн тăван Совет çĕршывĕн кашни пусăмне пĕр тумлам юн юлмиччен сыхласа, хутĕлесе тăмалла.

Тăшмана çĕнтерес тесен, пирĕнтен кашниннех, чи малтан, фронт интересĕсем çинчен астумалла, пур ĕçе те çĕршыва хӳтĕлессине, тăван çĕршыв интересĕсене хӳтĕлессине пăхăнтармалла. Эпир капиталистсем-

шĕн мар, хамăршăн ĕçлетпĕр. Эпир хамăр тăван çĕршыва фашистла вăрă-хурахсенчен хӳтĕлетпĕр. Пирĕн тивĕçлĕх—çине тăрса ĕçлесси, предприятисенче, транспортра, учреждениcенче, колхозсенче, совхозсенче çине тăрса ĕçлесси, ĕçленĕ çĕрте пĕрремĕш тата малти вырăнсене йышăнасси, Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те парса тăрасси пулать. Пирĕн Хĕрлĕ Çарăн, Тинĕс-Çар Флочĕн, авиацин мĕн кирли пурĕ те пулмалла. Пирĕн пурин те ырми-канми ĕçлемелле, çапла тунипе, паттăрăн çапăçакан Хĕрлĕ Çара пулăшса тăмалла.

Совет хĕрарăмĕсем тăван çĕршыва юратнине, ăна парăннине

пĕрре кăна мар кăтартса пачĕç. Хăйсен упăшкисене, ывăлĕсене, пиччĕшĕ - шăлнĕсене фронта ăсатнă чух вĕсем пĕтĕм чĕререн çапла каларĕç: „Асту, çапăçура хăюллă та хастар пул. Эсĕ илемлĕ, паха çĕршывăн тӳрĕ ывăлĕ, эсĕ—аслă аттен, Сталин юлташăн ывăлĕ, вăл хăватлă халăха çĕклентерсе пăхса ӳстерчĕ, халăха чухăнлăхран, тĕттĕмлĕхрен, пусмăртан хăтарчĕ, ССР Союзĕнчи пĕтĕм халăхсем валли савăнăçлă пурăнăç туса пачĕ. Вăл, аслă та ăслă çын, хамăр тăван çĕршыва, хамăр çĕнтерсе илнисене юратма, куç шăрçине сыхланă пек сыхлама вĕрентет", терĕç.

Пирĕн ывăлсем, упăшкасем, піччесемпе шăллăмсем фронта тăшмана çĕнтерессе шанса каяççĕ. Германия фашизмĕ этемлĕхĕн чи хаяр тăшманĕ пулнине вĕсем лайăх пĕлеççĕ. Совет çĕршывĕнчи кашни хĕрарăм—унăн ывăлĕ, упăшки е пиччĕшĕ-шăллĕ пирĕн тăван çĕршыва хўтĕлекенсен пĕрремĕш ретĕнче пулнипе хавасланать.

Совет хĕрарăмĕсен çакна астуса тăмалла: вĕсем питĕ нумай ĕçсем тума пултараççĕ. Сăмах—тăван çĕршыва хўтĕлесси çинчен, Хĕрлĕ Çара пулăшасси çинчен пырать вĕт.

Пирĕн фабрикăсемпе заводсенче пур станоксемпе машинă-

сем те туллин ĕçлемелле. Ста-
нокăн кашни простойĕ продук-
ци туса кăларассинче сисĕнет.
Çавăнпа та хĕрарăмсен чи пир-
вайхи задачи вăл—производст-
вăна каясси, пĕр-пĕр профессие
вĕренсе çитсе станок çинче ста-
хановла ĕçлесси, чи пысăк ĕç
тухăçлăхĕ тăвасси пулса тăрать.

Нумай пиншер те пиншер
килхуçи хĕрарăмĕсем производ-
ствăна хутшăнаççĕ, кăткăс ма-
шинăсене, специальноçсене вĕ-
ренсе çитеççĕ.

—Пирĕн упăшкасем фронта
кайрĕç, эпир производствăна ка-
ятпăр,—çапла калаççĕ Совет
хĕрарăмĕсем. Çак чĕнӳ пирĕн
çĕршыври патриоткăсене ытла-

рах та ытларах хавхалантарать. Хĕрарăмсем шахтăсене, строй-кăсене, заводсене, фабрикăсене, транспорта каяççĕ.

Çак ответлă самантра кашни çынăн пур енчен те хатĕр тăмалла, хăйĕн пĕтĕм ĕçне тăван çĕршыв оборонишĕн тумалла. Шалти пĕтĕçӳлĕх, мобилизациллĕ хатĕрлĕх, организацилĕх, пур çĕрте те çирĕп дисциплина— акă пире халĕ мĕн кирлĕ. Кашни çын хăйĕн пĕтĕм вăйне тискер, ултавлă тăшмана хирĕç кĕрешĕве парассине хăйĕн хисеплĕ те чыслă ĕçĕ, тесе шутлать. Совет хĕрарăмĕсен, вĕсем кирек ăçта пулсан та, кирек мĕнле ĕç тăваççĕ пулсан та, ăçта пулчĕ—

унта, пур çĕрте те, хăйне çапăçулла постра тăнă пек шутламалла, фронтри боец пек йĕркеллĕ, çирĕп, хăюллă, активлă ĕçлемелле, мĕншĕн тесен фронтпа тыл пĕр-пĕринпе уйăрăлми тачă çыхăнса тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçă условийĕсем хĕрарăма хĕçпăшал тыткалама пĕлме, сывлăшран тапăнсран сыхланмалли мĕнпур правилăсене обязательно пĕлме, харпăрхăй тĕллĕн сыхланмалли хатĕрсемпе, противогазпа усă курмашкăн пĕлме хушаççĕ.

Кашни хĕрарăмăн питĕ те çирĕп кăмăл, тӳсĕмлĕхпе чăтăмлăх пулмалла. Унăн нихăçан та хăраса ӳкмелле мар. Унăн обя-

зательно кĕреçепе, ломпа усă курма вĕренмелле, пушар сӳнтермелли правилăсене пĕлмелле.

Пур çуртсенче те, предприятисенче те санитарно-боевой дружинăсем пулмалла. Кашни хĕрарăмăн, кирлĕ чух пирвайхи пулăшу пама, медицина пĕлĕвĕсем пулмалла.

Боецсемпе командирсен сывлăхĕсемшĕн тăрăшасси —хĕрарăмĕсене госпитальсенче, лазаретсенче тата ытти сывлăх учрежденийĕсенче паттăрăн ĕçлеме хушать. Çак питех те кирлĕ задачăна пурнăçлама медицина сестрисен пĕлĕвне илни кирлĕ.

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче рабочисемпе работницă-

сем предприятисенче паттăрăн ĕçленĕ чухне, производствăра ĕçлемен хĕрарăмсен, уйрăмă-нах—килхуçи хĕрарăмĕсен, ра-бочисене лайăх ĕçлеме условисем туса парассишĕн хытă тăрăш-малла.

Апат-çимĕç продукцисене тир-пейлĕ, перекетлĕ тыткаласси, рвачсене хирĕç, столовăйсенче, магазинсенче продуктсене ça-ратса пĕтерекенсене хирĕç кĕ-решесси—питĕ кирлĕ ĕç.

Пирĕн çĕршывра халăха вал-ли кирлисем пур те пур. Анчах рвачсем, пуясшăн, хăйне валли сăптăрса илесшĕн, спекуляци тăвасшăн тăракан çынсем те са-хал мар-ха. Çакăн пек çынсене

хирĕç вăрçă вăхăтĕнчи законсене никĕсе хурса, пур майсемпе те çине тăрса кĕрешмелле.

Столовăйсем тата производство—вĕсем пĕр пĕтĕм пĕрлĕхлĕ япала. Лайăх хатĕрленĕ апат, рабочисемшĕн тăрăшни заводрă, фабрикăра производство заданине тултарма пулăшать. Магазинсен,ларексен, столовăйсен ĕçне массăллă - обществăллă контроле илмелле, çак ĕçе обязательно килхуçи хĕрарăмĕсене хутшăнтармалла, вĕсем хăйсем ĕçе йĕркелеме пултарнипе, паллах, мĕнпур çитменлĕхсене сирсе яма пулăшĕç.

Пĕтĕм революцилле кĕрешĕвĕн опычĕ—хĕрарăмсем питех те

сисĕмлĕ те тăрăшакан халăх пулнине кăтартса парать. Вĕсем паттăрăн тата нумай ĕçлеме пултараççĕ. Пирĕн малта пыракан, кирек мĕнле ĕçе те организацилеме пултаракан чаплă хĕрарăмсем сахал мар ÿссе çитĕнчĕç. Вĕсен организаторла ĕçĕ яланах кирлĕ пулнă, халĕ вăл уйрăмăнах питĕ кирлĕ. Колхозсемпе совхозсенех илĕр. Тырпул пухса кĕртес вăхăт çитрĕ. Пĕр пĕрчĕ тырă та çухалмалла мар. Тырпула, пахча çимĕçсене тата ытти культурăсене питех те тирпейлĕ пуçтарса кĕртмелле. Çак ĕçре нихăçанхинчен ытла хĕрарăмсен пĕтĕçÿлĕхĕ, организацилĕхĕ кирлĕ. Колхозницăсем

колхозра пысăк вăй пулса тăрасçĕ, вĕсем пĕтĕм уйхир ĕçĕсене аванах тума, тырпула лайăх пуçтарса кĕртме пултараççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи тапхăрта пирĕн большевикла сыхăлăха вуншар хут ÿстермелле. Çĕршывшăн çак хăрушă кунсенче пирĕн сыхă пулмалла, çивĕч куçлă пулмалла, мĕншĕн тесен пирĕн çине тапăннă тăшман вăйлă, хаяр, чее, юн хапсăнма юрататать. Паникерсене хирĕç кĕрешмелле, суя сăмах саракансене, тĕрлĕрен пулман ĕçсем çинчен халап саракансене, пăшăлтатса çÿрекенсене, тĕрлĕрен сведенисем ыйтса пĕлекен çынсене хирĕç хаяррăн кĕрешмелле.

Тăшман сывăрмасть, вăл пирĕн пата шпионсем, диверсантсем, сăтăрçăсем ярать. Пирĕн задача — çав çĕлен - калтасене тăрă шыв çине кăларасси, вĕсене хирĕç вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх пур хатĕрсемпе те, пур майсемпе те ним хĕрхенмесĕр кĕрешесси пулать.

Пирĕн халăхăн мĕнпур вăйĕсем, Совет çĕршывĕнчи хĕрарăмсен мĕнпур вăйĕсем пĕр тĕллев патне пыраççĕ, вăл—фашистла çĕлен-калтасене çĕмĕрсе тăкасси, çапса лапчăтасси.

Граждан вăрçин асран кайми кунĕсенче, хаяр кĕрешӳре—Совет влаçĕн пулмалла-и, е пулмалла мар-и, текен ыйтăва татса

пана вăхăтра, пирĕн çĕршывăн пĕтĕм халăхĕ, çĕнтерес кă-мăлăн пĕрлĕхĕпе вăйлăскер, Ленин-Сталин аслă партийĕн ялавĕ айне тăрса, пур тăшмансене те çĕмĕрсе тăкрĕ. Паян та Хĕрлĕ Çарăн, Тинĕс-Çар Флочĕн, сталинла чаплă соколсен вĕçĕмсĕр героизмĕ, паттăрлăхĕ, СССР халăхĕсен аслă та хăватлă вăйĕ тăшмана пĕтĕмĕшпех çĕнтерессине туса хурĕç.

Фашистла ордана пĕтеретпĕрех. Эпир, СССР халăхсем, çĕнтеретпĕрех, — мĕншĕн тесен пире кĕрешӳре пирĕн çулпуç, учитель, СССР Оборонăн Государственнăй Комитечĕн председателĕ Сталин юлташ ертсе пырать.

Цена 20 коп.

К. НИКОЛАЕВА

**СОВЕТСКИЕ ЖЕНЩИНЫ— НА ЗАЩИТУ ОТЕЧЕСТВА**

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАСССР
1941